ХЫПАР

НСЕМ
АНĂР

улталăкĕпех кирлĕ.

тăран шĕвекĕсемпе

лай. Çак витамин хатĕрлемелле: 20 а, вĕтетмелле. 0,5 лле. Çакăн хыççăн та сăрăхтармалла. елле. Пыл е сахăр

аминсем, органика

2 стакан вĕретнĕ а.
зат хушать, кăмăл-

Н –
КĂШМАН

100 г шур çырли-мл спирта, 200 г ле хутăштарса 3 м вырăнта ларт-нне 3 хут 1 апат мелле.
кашманпа кишĕр инчен усăллă. Кун-ăлла 100 г теркă-ĕре хăймапа ху-çимелле. Ÿсен-ĕпе хуташтарсан

АСЕ

ри туянасшăн
ча психикишĕн
ирлĕ пек пăхма
сан лайăхрах?

ТАТЬЯНА.
ашкар районĕ.

ине лайăх витĕм улма вĕрентеççĕ. ть тĕк йытă çури пахма çăмăлрах елĕклех. Кĕçĕн аванрах.

АСЛĂЛĂХ

ЯЛАНАХ ТĔЛĔНТЕРЕТ



Маншăн çеç мар, юнашар, хамар республикăра пурăнакансемшĕн çеç те мар, Раççейри, тĕнчери çĕр-çĕр çыншăн чăн-чăн Аслă Вĕрентекен пулса тăна Геннадий Никандрович Волковран тĕлĕнме пăрахмастăп эпĕ. Ахаль тĕл пулу-и, студентсен умĕнче лекци вулать-и е калаçу ирттерет-и, наука тĕпчев конференцийĕнче е пĕр-пĕр пухура тухса калаçать-и – кашнинчех итлекенсене тыткăна илет. Пурте ăна пĕр сăмах сиктермесĕр тимлĕн итлеççĕ. Вĕсен куçĕнчен пахатăн та нимĕн калама пĕлейместĕн – епле чĕрĕлĕх, пурнăçлăх, хавхаланупа ĕмĕт çиçет! Геннадий Никандрович хăй калаçма чарăнмасан ăна пухăннисем сехечĕ-сехечĕпе, кун тăршшĕпех итлеме хатĕр. Ăçта-ши çакăн вăрттăнлĕхĕ? Мĕнле мелсемпе, асамлахсемпе халăха тыткăнлать? Никам пĕлмен çав меслетсене пĕчĕккĕн алла иле-илех ĕнтĕ вăл академик, тĕнчери чылай университетан хисеплĕ профессорĕн ятне тивĕçнĕ.

ÇАПЛА шухăшлаттăм эпĕ. Анчах та хăй, Геннадий Никандрович, пачах та урăхла ăнлантарать: "Манăн çынсен умĕнче калаçура нимĕнле вăрттанлăх, чее мелсем те çук. Мана асанне, анне, атте мĕн пĕчĕкренех çапла вĕрентнĕ – улталаса, хитре сăмахсем шыраса ан калаç, тĕрĕссине, хавăн чуну мĕн хушнине, мĕн шухăшланине пĕлтер. Çав сăмахсене мĕн пĕчĕкренех шута илсе пурăнатăп, калаçатăп та. Çаксем темле хисеплĕ ятран та, темле должноçран та хăватлăрах, ĕнентерÿлĕрех, хаклăрах та чыслăрах, сумлăрах иккен. Тата çакна калам. Юрататăп эпĕ çынсене. Пурне те юрататăп. Никам та çĕр çине усал пулса çуралмасть. Мĕн чухлĕ ăна хăвăн ăшшуна, юратăвна паратăн – вăл та пурнăç çине çавăн чухлĕ ĕненÿллĕн, шанчăклăн, юратуллăн пăхать".

Сăмахăм кунта манăн Геннадий Никандрович çынсемпе тÿрремĕн тĕл пулса калаçнă вăхат, самант пирки çеç пычĕ-ха. Унăн çынсене тыткăнлас туртăм-туйăм вăл çыракан кĕнекесенче те усăмлăн палăрать-çке! Çулĕсем хушăнсах пыраççĕ Геннадий Никандровичăн. Кăçал 80 çул тултарать. Анчах унăн ĕçлеслĕх туртăмĕнче çакна асăрхаймăн. Статья хыççăн статья çырать, кĕнеке хыççăн кĕнеке тухать. Асăнар-ха хăшĕсене: "Педагогика любви". Икĕ томлă. Мускавра пичетленнĕ. "Педагогика национального спасения". Элистара пичетленнĕ. "Чувашская этнопедагогика". Монографи. Шупашкарта вичĕм çул пичетленнĕ. "Жизнь, смерть и бессмертие патриарха". Монографи. Шупашкарта тухнă... Вулакан патне 2006 çулта çитнĕ "Духовное просвещение" монографи пирки чарăнса тăрасшăн. Геннадий Никандрович ăна Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров 2006 çула Ăсхакăл çутлăхĕн çулталăкĕ тесе пĕлтернине халалласа ятарласа хатĕрленĕ. Унта вăл ăс-хакăл çын шухăшлавĕн, хăйне тытнин, пурăннин тĕп шăнăрĕ пулнине, этнопедагогика çемьепе ăрусен тăсăмĕн никĕсĕнче тăнине усăмлăн кăтартса парса вулаканпа канашлать, сÿтсе явать. Çапла, çапла – вăл кун пек, ку çакăн пек тесе вăйпа, хистесе çирĕплетмест, тÿрех ĕненме хистемест. Канашлать, хăйĕн пурнăçĕнчи тĕслĕхсене, уйрăмах ваттисемпе, асаннĕшĕпе, ашшĕ-амăшĕпе пулса иртнĕ самантсене илсе кăтартса, аса илсе вулаканпа калаçать.

Тепĕр тесен, монографи ум сăмахĕнче студентсене пулăшма çырнă вĕрентÿ пособийĕ тесе çырнине вуласан, тен, хăшĕсем айккине пăрса хума та тăрăшĕç. Ара, çав кĕнекесенче çĕр-çĕр термин, ăслăлăх ăнланăвĕсемпе каларăшĕсен айне путатăн та – автор мĕн пирки каласшăнчĕ-ши тесе тÿрех ăнланаймастăн та. Акă, педагогика ыйтăвĕсемпе çырна кĕнекесем пуриншĕн те – ахаль пĕлÿллĕ çеç-и эсĕ е аслă пĕлÿ илнĕскер-и, ăнланмалла кĕнекесем пулмалла пек. Мĕншĕн тесен вĕрентÿпе воспитани ĕçне пурте хутшăнаççĕ тата хутшăнмалла та: халĕ çеç ача çуратнă амăшĕ те, начар хут пĕлекен кукамăшĕ-асаннĕшĕ те, урамри сак çинче ларакан хĕрарăмсем те, паллах, учительсемпе пуçлăхсем пирки калама та кирлĕ мар. Апла çав педагогика темипе çырнă кĕнекесене пурте ăнланма, ăнланса илсе вулама пултармалла та. Тен, эпĕ ытларах та калатăп – вĕсене кăмăла каякан, хускатса янă пĕр-пĕр калава, юмаха, детектива вуланă пек вуламалла. Г.Н.Волковăн кашни кĕнекине çапла вулатăн та.

"Духовное просвещение" монографин ыра енне те çаплах палăртасшăн. Кĕнекере вăл Никита Бичурин, Геннадий Айги, Лев Толстой, Александр Пушкин "чăн çăлтăрсем" пирки епле ăшшăн, чуна илĕртмелле çырать. Вĕсене юратас, пĕлес килет, вĕсемпе тата ытларах мухтанас, мăнаçланас килет. Пăхăр-ха: çÿлте асăннă чаплă çынсем пирки мĕн чухлĕ, кам кăна çырман. Анчах Геннадий Никандрович вĕсен эпир пачах та пĕлмен тĕнчине уçса парать. Тĕлĕнмелли, савăнмалли тĕнчене. Вăл çеç-и? Пире, вулакансене, тĕпчевçĕсене те ят тивтерсе илет. Чун çăлтăрсене сахал тĕпчетпĕр, сахал хаклатпăр, çителĕксĕр чыслатпăр. Епле кăмăллă, мăнаçлă тата Николай Савруков çинчен вулама. Шел, тивĕçлипе ăнланса илме, кирлĕ пек хаклама пĕлместпĕр-ха ăна. Г.Волков калашле – Улăп вăл. Чăвашлăхшăн, халăхшăн, унăн малашлăхĕшĕн çунаканскер, канăçа пĕлменскер. Ял, хресчен çине еплерех пăхать тата Геннадий Никандрович! Çĕнĕ куçпа, çĕнĕ хаклавпа. Эпир ялăн хулапа танлашмалла, унăн шайне çĕкленмелле тесе вун-вун çул шухăшлатпăр, ĕçлем пекки тăватпăр. Геннадий Никандрович вара пачах урăхла каласа тĕлĕнтерет: йăнăшатпăр, хула çыннин ял çыннипе танлашассишĕн тăрăшмалла, ĕçлемелле, кĕрешмелле. Ун чухне пирĕнтен чылайăшĕ ĕçчентерех, пултаруллăрах, талантлăрах пулĕ. Килĕшетĕр-и? Килĕшместĕр? Тавлашмастăп сирĕнпе. Геннадий Никандровичăн кĕнекине çеç тытса вулăр. Ун чухне вара калаçăпăр.

■ **Константин ПОРТНОВ**

ТЕ
УК

В çыні вилĕ рет: пĕтĕ шучĕ йыш çулс çыні тапх тытн Шуп
И цифі проц проц çулта вĕсе вĕсе

ÇА
ÇЕ

Çі
тĕп чыла цийĕ член пама Респ телĕс нума ăмăр Унсă
Чă туриз кунсе трен Анат трен патĕн ран, тава Енĕн Юлаі спор тра

Сертифицированы.